Приоритетлă наци проекчĕ

Диспансеризаци çинчен

Сывлăха сыхлас тĕлĕшри наци проекчĕн тĕп мероприятийĕсенчен пĕри ĕçлекен çынсен сывлăхне тĕрĕслесе тăраси, чире малтанхи тапхăрта тупса палăртса сиплесси пулса тăрать. Çав тĕллевпе 2006 çултан тытăнса вĕрентӳ, сывлăха сыхлас, социаллă хӳтлĕх, культура, спорт, наукăпа тĕпчев ĕçĕпе çыхăннă 35-55 çулсенчи патшалăх тата муниципаллă учреждениесенче вăй хуракансем тĕлĕшпе хушма диспансеризаци ирттерчĕç. Кăçал вара пур çултисене те диспансеризаци витĕр кăларма палăртнă.

Хушма диспансеризаци тĕрĕслевне ирттерни социаллă пĕлтерĕшлĕ чирсене вăхăтра тупса палăртса эффективлă сыватассипе çыхăннă. Диспансеризаци тĕрĕслевĕнче тĕп ĕç чирсен малтанхи тапхăрне тупса палăртасси, сиплессипе йĕркелесси тата реабилитацилесси шутланать. Диспансеризацире чи малтанах анлă сарăлнă туберкулез, рак, глаукома, сахăр диабечĕ, чĕре чирĕсене тупса палăртмалли меслетсемпе усă кураççĕ. Шăпах çаксем йывăртарах чирсем шутне кĕреççĕ, вĕсем хавшатнипех чылайăшĕ инвалида тухать е пурнăçран вăхăтсăрах уйрăлать. Диспансеризаци тĕрĕслевĕ витĕр вĕрентӳ ĕçĕнче вăй хуракан 864 çынна, сывлăха сыхлас ĕçре тăрăшакан 390 çынна, социаллă хӳтлĕх ĕçĕпе çыхăннă 74 çынна, культурăра вăй хуракан 38 çынна кăларма палăртнă. Анчах та çак ĕç питĕ ерипен иртет, яваплăх сисĕнмест. Апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе те 111 çын кăна çак ĕçе пурнăçласа пĕтернĕ е çакă 8,13 процентпа танлашать. Культура тата социаллă хӳтлĕх сферинче тăрăшакансем вара пĕр çын та диспансеризацие килмен.

Диспансеризаци пĕтĕмлетĕвне вырăнти врач тăвать, мĕншĕн тесен вĕсем пациентсем çинчен ытларах пĕлеççĕ: асламшĕпе асламăшĕ, ашшĕпе амăшĕ, çывăх тăванĕсем мĕнпе чирленĕ, мĕнрен асăрханмалла. Пĕтĕмлетĕве ушкăнсем çине уйăраççĕ. Пĕрремĕш ушкăна сыввисене кĕртеççĕ. Иккĕмĕшне – чире пуçарма пултаракан факторсемпе çывăх пулнисене. Виççĕмĕш ушкăна чир паллисене тупнă çынсене кĕртеççĕ. Тăваттăмĕшне – стационарта сиплемелли чирсемпе чирлисене. Пиллĕкмĕш ушкăна шалах кайнă чирсемпе чирлекенсене кĕртеççĕ. Çапла вара диспансеризаци тĕрĕслевĕнче пулнисене сывлăх шайне ушкăнсем çине пайлатпăр. Пĕрремĕш ушкăнра 14 процент, иккĕмĕш ушкăнра 10 процент, виççĕмĕш ушкăнра 60 процент, тăваттăмĕш ушкăнра 15 процент пулни палăрчĕ. Асăрхарăр ĕнтĕ, ытларах пайĕ чир паллисене тупнă çынсем пулчĕç. Çавăнпа та этемĕн чи пысăк пуянлăхĕ сывлăх пулнине тĕпе хурса ун çинчен паянах шутласчĕ. Сывлăха упрасчĕ, чир паллисене тупсан сипленесчĕ, пурин те яваплăха туясчĕ. Çак графикпа килĕшӳллĕн кашниех вăхăтра çитме тăрăшасчĕ.

Диспансеризацие пурнăçлама районти больницăра пур специалистсем те çителĕклĕ. Хĕрлĕ Чутай, Элĕк, Етĕрне районĕсенчи больницăсенче пур специалистсем те çук пирки вĕсемпе килĕшӳ тунă. Çавăнпа та тĕп больницăри врачсен ытти районти пациентсемпе те ĕçлеме тивет.

А. ЧИНОВНИКОВА, "Муркаш районĕн тĕп больници" муниципаллă сывату учрежденийĕн тĕп врачĕн çумĕ.

Милици хроники

Ултав çулĕ ăçталла?

Ĕçме-çиме юрăхсăр, пахалăхсăр тавар сывлăха хавшатнине пĕлетпĕр-ха. Анчах та çавна пĕлсе тăрсах унпа суту-илӳ туса укçаллă пулма тăрăшакансем те тĕл пулаççĕ.

Кашмаш ялĕнчи Советсен урамĕнчи 34 çулхи хĕрарăм ытла та пӳтсĕрле хăтланнă. Спирт пур шĕвек пахалăхсăр, ĕçме юрăхсăр пулнине пĕлсе тăрсах ăшне "вут хыпнă" арçынна сутать. Çур литр кĕрекен "Водка особая хлебная" эрех кĕленчи тĕпĕнче пахалăхсăр пăтранчăк курăннă. Çапла вара эрехре диэтилфталат хутăшĕ пулнă, пахалăхĕ ГОСТпа килĕшсе тăман. Апрелĕн 19-мĕшĕнче çак сутуçă пирки РФ УК 238 статйин пĕрремĕш пайĕпе 9363-мĕш уголовнăй ĕç пуçарнă. Акă ăçта илсе çитерчĕ те ĕнтĕ 34 çулхи хĕрарăма эрехпе сутă туни.

Чăн-чăн арçынсем юлмарĕç те пулас

Хĕрарăм, çемье çавăрнă май, арçын пĕтĕмĕшле тĕрек пуласса шанать. Анчах та чылай чухне шанăç ĕмĕтре кăна юлать.

Акă, Шомик ялĕнчи Торикова урамри пĕр çуртра пурăнакан 32 çулхи арçынна мĕн хĕтĕртнĕ-ши çын картĕнчен тухса кайма? Апрелĕн 18-мĕшĕнче 22 сехетре çав ялти магазин умĕнче арăмĕпе хирĕçӳ кăларать. Урса кайнăскер, пуçран пĕрре кăна çапнипе çырлахмасть, хăй пӳтсĕрле хăтланăвне малалла тăсать. Çапла вара хĕрарăм сывлăхне хавшатать. Ку ĕç пирки РФ УК 116 статйипе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Тен, эпир пурнăçран ытла иртĕнсе кайрăмăр. Çаплах та пулĕ, мĕншĕн тесен чунсăрлăх хуçаланать пӳтсĕр çынсен чĕрисенче, этем чунĕ те тахçанах тухса тарнă тейĕн.

Апрелĕн 21-мĕшĕнче çӳлерех асăннă арçын Шомик ялĕнчи Шомиковски урамĕнчи пĕр хуçалăха çитет. 10 сехетре 84 çулхи хĕрарăма çĕçĕпе вĕлерессипе хăратать. Çакăн пирки РФ УК 119 статйипе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Сарă хĕвел пурин çине те пĕр пек пăхать, ăшăтать, анчах çыннăн ăсĕ-пуçĕ, шухăш-кăмăлĕ пĕр пек мар çав. Пӳтсĕр çын пӳтсĕрлех хăтланать. Анчах та 32 çулхи арçын каçарăва тивĕç-ши?

Акă тата Шурча ял тăрăхне кĕрекен Кӳстерек ялĕнчи 50 çулхи арçын, арăмĕн сывлăхĕ самай хавшаккине пăхмасăрах, хĕнет, вĕлерессипе хăратать. Ун пирки те 116, 119 статйисемпе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Çын тени ачаран мĕнле воспитани илсе ӳсет, çитĕнсен те çавнашкалах пулать, теççĕ. Усаллине курса ӳссен, усаллих малалла тăсăлать-ши? Мăн Сĕнтĕр салинче пурăнакан 52 çулхи арçын Хыркасси ялĕнчи хĕрарăма майĕнчен кĕреçепе çапнине тата мĕнле ăнланмалла-ши? Паянхи пурнăçра пурте пĕр тан правалла, анчах мĕншĕн-ха хăш-пĕр арçынсем хĕрарăмсене, вĕсен тăрăшулăхне хаклама пĕлмеççĕ. Тав сăмахĕ вырăнне чĕрене касса татакан, çĕçĕпе чикнĕ евĕр сăмахсем калаççĕ.

Чунсăрлăх

Майăн 8-мĕшĕнче район администрацийĕнче, Муркашри сĕт-çу заводĕнче вăй хуракансем Муркашра 600 чечек тĕмми лартса хăварнăччĕ. Анчах та çак илемлĕх çине алă çĕклекенсем те пур иккен. Сарă тата хĕрлĕ гвоздикăсене 12 тĕм кăкласа кайнă. Ку сăтăрла ĕçе тăвакансем пирки районти шалти ĕçсен пайне пĕлтерме ыйтаççĕ.

Районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

Çын тата саккун

Пурнăçри пăтăрмахшăн ача айăплă-ши?

Çамрăк мăшăр çемье чăмăртанă май çутă пуласлăх, телейлĕ кун-çул пирки ĕмĕтленет. Ача-пăчаллă пулса, ĕмĕр вĕçне пĕрле утса тухма тĕв тăвать. Çавна май пĕри пурнăçра хăйĕн тĕп тĕллевĕсене пурнăçласа малалла пăхать. Тепри вара, пурнăç кустăрмине алăран вĕçертсе, тĕрлĕ енлĕ кустарать. Ун пек чухне ырă ĕмĕтсем, тĕтре евĕр сĕвĕрĕлсе, кусран çухалаççĕ те çемьере тĕрлĕ пăтăрмах, харкашу пуçланать. Кайран вара хура пĕркенчĕклĕ, тăварлă куççуллĕ уйрăлу ума килсе çитет. Çапла вара телей кайăкне алла тытма ĕмĕтленнĕ ача чунĕ аманать. Йывăр лава туртма хăнăхнă хĕрарăм, ачасене ура çине тăратас тесе, кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăрăшать. Çав вăхăтрах ик айкки те тăвайкки текен арçын вара ачасен пурнăçĕпе кăсăкланмасть, хăйĕн тивĕçне пурнăçламасть.

Алимент сăмах хăшне-пĕрне шартах сиктерет. Ара саккун пуриншĕн те саккунах вĕт. Харпăр хăй тивĕçне манăçа кăларсан, никама та пуçран ачашласа çемçе минтер çине лартмаççĕ-çке. Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 157 статйин пĕрремĕш пайĕпе çул çитмен, çавăн пекех вун саккăра çитнĕ, анчах ĕçлеме пултарайман ачасене тытса тăма суд йышăнăвĕпе укçа тӳлессинчен пăрăнакан ашшĕ-амăшĕсене 120 сехетрен пуçласа 180 сехетчен обязательнăй йĕркепе ĕçлеттерме е пĕр çуллăха ĕçлесе юсанмалли çĕре яма, е виçĕ уйăхлăха арестлеме пултараççĕ.

Ачасене пăхса пурăнма тăтăш, нумай вăхăт хушши тата ятарласа алимент тӳлеменнине юри тунă преступлени тесе шутлаççĕ. Айăпа кĕнĕ çын хăйĕн вырăнне, ăçта пурăннине пĕлтерменни те çавăн шутнех кĕрет. Айăпа кĕнĕ çыннăн тивĕçлĕ укçа-тенкĕ тӳлесе тăма майсем пур, анчах та судпа йышăннă тивĕçе пурнăçлассинчен пикенсех пăрăнать пулсан, вăл çакна юри тунă тесе шутлаççĕ.

Уголовнăй майпа айăпласа ĕçлесе юсанмалли наказани панисене регистрацилекен Муркаш районĕнчи инспекцире кăçалхи виçĕ уйăх хушшинче икĕ çынна шута илнĕ. Иртнĕ çулхи çак тапхăрта виççĕн пулнă. Иккĕшне çул çитмен ачисене пăхманшăн ашшĕ прависенчен хăтарнă.

Хăйсен тивĕçĕсене пурнăçлайманнисене ятранах асăнса хăварар. Юнкă ялĕнчи Юрий Рудольфович Коноваловăн парăмĕ 83790 тенкĕпе танлашать. 1958 çулта çуралнă арçын ачасем умĕнчи парăма çав териех ӳстерсе яни вара ытла та пӳтсĕрле пулăм.

Çавăн пекех Хыркасси ялĕнчи 37 çулхи арçыннăн парăмĕ те пысăк. Сергей Александрович Толстовăн алимент сумми 46006 тенкĕпе танлашать. Мăн Сĕнтĕрти 1965 çулта çуралнă Сергей Леонидович Петровскин те алимент пирки пуçа самай çĕмĕрттерме тивĕ.

Асăнса хăварни ытлашши пулмĕ. Çӳлерех асăннă статьяпа суд тунă çынсене Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 49 статйипе (ятарласа ĕçлеттермелле туни) тата РФ УК 56 статйипе (ĕçлесе юсанмалла туни) айăплаççĕ. Енчен те айăпа кĕнисем суд йышăнăвне пурнăçлассинчен юриех пăрăнаççĕ пулсан, суд çавăншăн вĕсен ирĕкĕсене хĕсме, вĕсене арестлеме е ирĕкрен хăтарма пултарать. Çавăнпа та пĕр-пĕринпе килĕштерсе, хисеплесе пурăннине нимĕн те çитмест. Ачасем пирĕн малашлăх пулнине манас марччĕ. Апла пулсан вĕсене ытларах тимлĕх тата ашшĕ-амăшĕн ăшши кирлĕ.

Л. ЯДЫКОВА, милици майорĕ, аслă дознаватель.

Сăн ӳкерчĕкре: атте, эпĕ санăн пурнăçунта ытлашши-ши е тивĕç пар-и эпĕ телейлĕ кун-çула? Ан карсамччĕ эсĕ хура чатăр манăн умăма!

Пĕлтерӳсем. Объявления

Куплю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши.
Тел.: 8-927-853-54-21. 1-2.

СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ
любой сложности, от 3000 рублей, с установкой. Триколор – 5000 руб.
Тел.: 8-906-385-29-30. 3-8.

18 мая в РДК Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи.

Куплю квартиру в с. Моргауши.
Тел.: 8-903-064-01-34. 1-2.

Продаем керамзитобетонные блоки, цемент, шифер, рубероид, доски, кирпич. При покупке керамзитобетонных блоков на остальной товар скидки.
Тел.: 8-960-307-41-78, 8-927-851-47-82. 1-3.

БЫТОВАЯ ТЕХНИКА
по оптовым ценам на заказ:
телевизоры, холодильники, СВЧ-печи, стиральные машины, электроинструменты, пылесосы, мотоблоки и многое другое.
Тел.: 8-906-385-29-30. 3-8.

ОАО «Моргаушскагропромхимия» требуется электрогазосварщик IV-V разряда с опытом работы не менее 3-х лет. Оплата 5000 (пять тысяч) рублей.
Контактный телефон: 60-2-41.

ООО «Снабцентр «Заря» сообщает о прекращении своей деятельности. Претензии принимаются со дня опубликования по тел: 34-2-16.

Пĕрремĕш хут пăрулана хура тĕслĕ ĕне сутатпăр.
Адресĕ: Москакасси ялĕ, Московская урам, 36-мĕш çурт, Галина Васильева.
Тел: 8-960-301-81-76.

Администрация и профсоюзный комитет Чебоксарского ТПУ выражают глубокое соболезнование родным и близким в связи с трагической смертью работника Чебоксарского ТПУ
РОМАНОВА Сергея Григорьевича.
Мы скорбим вместе с вами.

Муркашри тĕп больница коллективĕ кунта акушер-гинеколог пулса ĕçлекен Н.А. Лобачевăн амăшĕ
Анастасия Порфирьевна МАРКОВА
вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ хуçалăхра нумай çул хушши вăй хунă ĕçпе вăрçă ветеранĕ
Иван Григорьевич ТЕПЛОВ
вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ хуçалăхра нумай çул хушши вăй хурса ĕçленĕ
Раиса Андреевна ЕФРЕМОВА
вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Пирĕн пата çыраççĕ

Манăн асатте

"Кайăк хитре тĕкĕпе, этем ырă ĕçĕпе", – тенĕ ватăсем. Тĕрĕс сăмахсем.

Кашни ялтах ĕçĕпе палăрнă çынсем пур. Вĕсем хушшинче манăн асатте те. Манăн асатте Мартын Петрович Петров. Вăл 1929 çулта çуралнă. Муркаш районĕнче Анатри Панклиялĕнче çуралса ӳснĕ. Пурнăçĕ йывăр пулнă унăн. Хĕсметре тăватă çул пурăннă, моряк пулнă.

1954 çулта Советскине трактористсен курсне вĕренме кĕнĕ. Асатте унта пиллĕксемпе кăна вĕреннĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ манăн асатте ăспа пуян. Çав çулах тракторпа ĕçлеме тытăннă. 1955 çулта асаттепе асанне мăшăрланнă.

Эпĕ аппапа Йӳçкассине кайсан та манăн асатте лайăх çын пулни çинчен илтме пулать. Манăн асаттен Хисеп грамотисем те пур. Асатте кăмăллă, ырă чунлă пулнă.

Шел пулин те, вăл эпĕ çураличчен яланлăхах пирĕнтен уйрăлса кайнă. Эпĕ унăн ырă тата ăслă сăмахĕсене илтеймен.

Манăн асатте ăспа та пуян пулнă. Асатте çинчен эпĕ асанне сăмахĕсенчен пĕлтĕм. Асатте маншăн тĕслĕх пулса тăчĕ.

Н. ПЕТРОВА, Панкли шкулĕнчи 7-мĕш класра вĕренекен.

Спорт

Кăтартăвне лайăхлатнă

Майăн 9-мĕшĕнче Мускав хулинче хăвăрт утассипе Раççей кубокне çĕнсе илессишĕн Гран-при ăмăртăвĕсем иртнĕ. В. Егорова ячĕпе хисепленекен ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн воспитанникĕ Нина Охотникова 5 километрлă дистанцире пĕрремĕш пулнă, хăйĕн малтанхи кăтартăвне лайăхлатнă, дистанцие 22 минут та 14 секундра вĕçленĕ.

И. СМИРНОВ.

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru
Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3511.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 11.05.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру ШАПОШНИКОВ В.Л.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.